Эрехре-ши айăпĕ?

# Черкке тытиччен – тытманни

Лавкка сентрисем çинче хаяр шĕвек тултарнă кĕленчесене пĕрре те илĕртӳллĕ тесе калас килмест. Тата çав организма сиен кӳрекен шĕвеке ăш-чик витĕр кăларма çавăн чухлĕ укçа тӳлесе илме те питĕ шел. Шел кăна та мар, пĕрре çеç пурăнатпăр та, сывлăхĕ темрен те хаклăрах-çке.

Эрехе пула вара, тĕрĕсрех каласан, ăна ĕçме пĕлменнине пула пин-пин çын вăхăтсăрах пурнăçран уйрăлать. «Леш тĕнчере те лайăх çынсем кирлĕ, теççĕ» каларăш ку лару-тăрура тем тесен те вырăнсăр. Айăпне вара çынрах шырамалла.

Акă районти ЗАГС пайĕнчен пĕлтернĕ тăрăх, иртнĕ çулта пурĕ 619 çын вилнĕ. Ку пысăк цифра. Çаксем хушшинче вара эрех ĕçсе вилнисем те çук мар. Уйрăмах декабрь уйăхĕнчи сивĕсенче эрех ĕçсе шăнса вилни пĕрре мар пулчĕ. Муркашри тĕп больницăран пĕлтернĕ тăрăх вара унти хирурги уйрăмĕнче халĕ те алă-урасене, пӳрнесене шăнтса янипе вунă çынна яхăн сипленет.

Ӳсĕрле руль умне ларни те хăйĕннех тăвать: е пурнăçран уйăрать, е вăй питти çынсене ĕмĕрлĕх уксах-чăлах тăратса хăварать. Çавăнпах теприсем водитель руль умне ӳсĕр ларсан, машинăна мĕншĕн тапранмалла мар шутласа кăларман-ши, тенинчен те кулмалла мар. Акă статистика палăртнă тăрăх, Раççейре çулталăкне ӳсĕрле руль умне ларнипех 35 пин çыннăн пурнăçĕ татăлать. Пирĕн районти шалти ĕççен пайĕн патшалăх çул-йĕр хăрушсăрлăх инспекцийĕнчи сведенисем те ăплантармаççĕ-ха. Иртнĕ çулталăкра ӳсĕр водительсене пула 1 çын сарăмсăр вилнĕ, 10-ăн аманнă. Çакă вăл 5 аваринче. Январь уйăхĕн иртнĕ кунĕсенче çеç-ха инспекторсен водительсем пирки 4 протокол çырма тивнĕ. Виççĕшĕн тĕлĕшпе 15 талăклăх хупса арест мелĕпе усă курнă.

Эрехĕ ырри патне илсе çитерменнине пĕлсех (чылай чухне пĕлсех!) уявсенче те, çак шĕвеке хытă «хисепленипех» пулĕ, ăна апат-çимĕçрен те ытларах туянатпăрçке. Çемье бюджечĕ чăтать. Каллех статистика тупса палăртнă тепĕр кăтартăва илсе парас килет. Çемьере тăтăшах эрех ĕçсе «киленекен» пурри çемье тупăшĕн 40 процентне, тепĕр чух 60 проценчĕ таранах çилпе вĕçтерсе ярать. Çапла вара пĕр ача амăшĕн ӳсĕр упăшкапа пурăнса (амăшĕн сĕчĕпе тăн кĕменни кайран та кĕмест пулас) иккĕмĕш, виççĕмĕш ачана çуратасси çинчен шутлама ăçтан пултăр ĕнтĕ шухăшĕ. Тумлантармалла, çитермелле, вĕрентмелле... – çынран кая юлмалла мар тата паянхи пурнăçра. Кĕленчене ытамлакансен вара çӳлерех çырни пирки шутлама вăхăт çук. Тарăхтараççĕ-и вĕсене, вăрçса илеççĕ-и е тата мĕнле те пулин ĕç тӳрех пурнăçланмасть-и – вăйсăр çыннăн, вăл ӳт-пӳ тĕлĕшĕнчен вăйлă пулни те пĕлтерĕшсĕр, шел пулин те, киленĕвĕ те пĕр тĕслĕ çеç. Вăл – юнашар çынсен кăмăлне хуçаканни, хăйсен сывлăхне хавшатаканни. Çавăнпа та кăмăл-сипет енĕпе вăйсăр çынсен черкке тытиччен – тытманни.

**Н. НИКОЛАЕВА.**

Çулталăка пĕтĕмлетсе

# Активлăрах пурăнма тăрăшар

Иртнĕ çул Раççей Президенчĕн Указĕпе Çамрăксен çулталăкĕ пулчĕ. Паллах, пирĕн районта та çак указа пурнăçа кĕртес тесе район администрацийĕн пуçлăхĕн постановленийĕпе килĕшӳллĕн мероприятисен планне çирĕплетнĕччĕ. Мероприятисем предпринимательство, инновациллĕ ĕç-хĕл сферисене çамрăксене активлă явăçтарассипе çыхăнчĕç. Кунсăр пуçне çамрăксен пултарулăхĕ, вĕсене патриотла воспитани парасси, обществăлла политика сферинчи активлăха ӳстерес тата ытти ыйтусем те тăчĕç пирĕн умра.

Вулакансене пĕлме малтанах паянхи кун тĕлне пирĕн районта пурăнакансен 25 проценчĕ – тăхăр пин çурă ытла – çамрăксем (14-30 çул) пулнине каласа хăварас килет. Вĕсенчен 38 проценчĕ (3499) вĕренекен çамрăксем, 46 проценчĕ (4259) ĕçлет, 13 процент (1192) вăхăтлăх ĕçлеменнисен ретĕнче, 3 проценчĕ вара халăха ĕçпе тивĕçтерес центрта учетра тăрать.

Паянхи кун районта 1200 ытла çамрăк çемье. Çакă вăл сахал мар. Анчах та вĕсене пĕрлештерсе тăракан çамрăк çемье клубĕсем районта çителĕксĕрри курăнать. Мăн Сĕнтĕрте, Муркашра тата Москакассинче аван ĕçлесе пыраççĕ-ха вĕсем. Ытти ял тăрăхĕсенче вара çак ыйту çине тимлĕх ытларах уйăрмалла. Çамрăксен çулталăкĕнче Шурчари шкул çумĕнче педагогсен вăйĕпе çамрăк çемьесен «Семицветик» клубĕ ĕçлеме тытăнчĕ. Борзаевсен («Семицветик») тата Кудашовсен («Лад да любовь») çемйисем республика шайĕнче те палăрма пултарчĕç. Апла ыттисен те малалла туртăнмалли хавхалану пур темелле, тĕслĕх илмелли те çумрах.

Çамрăксем вĕренсе тухнă хыççăн хуçалăхсене ĕçлеме таврăнманни те – çивĕч ыйту. Çак тĕллевпех Чăваш патшалăх ял хуçалăх академийĕн, Шупашкарти кооператив институчĕн преподавателĕсемпе тата студенчĕсемпе тĕл пулусем иртрĕç. Анчах та ыйтăва çакăнпа кăна татса пама май çуккине ăнланатпăр. Çавăнпа та ку тĕлĕшпе нумай ĕçлемелле-ха.

Районти предприятисем, организацисемпе учрежденисем çумĕнче çамрăксен канашĕсем пурри çамрăк специалистсен ĕçне интереслĕрех тума май парать. Акă кăçалхи çул çакна шута илсех ĕнтĕ Мăн Сĕнтĕрти культура ĕçченĕсем тата райпо системинче вăй хуракансем хăйсен канашĕсене йĕркелесе ĕçлеме тытăнчĕç. Ку таранччен вĕсем районта çамрăк педагогсен, медицина ĕçченĕсен, район администрацийĕнче тăрăшакансен тата Муркашри райпо коллективĕнче çеç пулнăччĕ.

Уйрăм ыйту вăл – ял тăрăхĕсенче çамрăксемпе ĕçлесси. Çак ĕçре, шел пулин те, пуçарулăх çитменни палăрать. Çамрăксен канашĕсем пур тетпĕр-ха, анчах та «вĕсем çителĕксĕр ĕçлеççĕ» тенине хальлĕхе хирĕçлеме çук. Паллах, ĕçе обществăлла майпа туса пыни витĕм кӳрет пулĕ. Анчах та эпир – çамрăксем – хамăр тăрăшмасан, активлăх кăтартмасан, пурăнма интереслĕ мар тесе калани те килĕшӳсĕр пек туйăнать. Малтанах, айтăр-ха, хамăр çине пăхса илер те малалла вăйсене пĕрлештерсе активлăрах пурăнма тăрăшар.

**Е. ЧЕРНОВА,**
**район администрацийĕн çамрăксемпе ĕçлекен специалисчĕ.**

2010 çул – Вĕрентекен çулталăкĕ

# Пултаруллисенчен пĕри

Учительсем – пур ачашăн та иккĕмĕш атте-анне вырăнĕнче. Вĕсем пире пĕлӳ параççĕ, пĕчĕкренех вулама-çырма вĕрентеççĕ. Пур çын та пултараймасть çак йывăр, çав вăхăтрах интереслĕ ĕçе пурнăçлама. Аслă, чăтăмлă пулнисĕр пуçне Турă пани те кирлех пуль çак ĕçре. Ачасене хăвăн предметпа интереслентерме, çĕнĕ темăна кирлĕ пек ăнлантарма çăмăл мар, паллах. Учительсен пĕтĕм шухăшĕ те ачасемпе çыхăннă. Çур пурнăçĕ вĕсен шкултах иртет. Уроксем вĕçленсен те вĕсем киле васкамаççĕ: тĕрлĕрен кружоксем ирттереççĕ, вĕренӳре юлса пыракансемпе ĕçлеççĕ, тĕрлĕрен олимпиадăсене хатĕрленме пулăшаççĕ, конкурссене явăçтараççĕ, тетрадьсене тĕрĕслеççĕ. Кашниех тав сăмахне тивĕç.

Чуманкасси шкулĕнче те ачасене çирĕп пĕлӳ парас тесе нумай учитель тăрăшса ĕçлет. Вĕсенчен чи хисеплĕ те пултаруллисенчен пĕри – Ольга Михайловна Перлова.

Ольга Михайловна пирĕн шкулта 1974 çултанпа ĕçлет. Малтанах вăл 1–4 класс ачисене вĕрентнĕ. Нумай ачана пĕлӳ тĕнчипе пĕрремĕш утăмсем тума пулăшнă. Пуçламăш класс ачисене вĕрентме çăмăл марри паллă ĕнтĕ. Пĕрремĕш класа пынă ачасем сас паллисене те палламаççĕ, парта хушшинче те ларма пĕлмеççĕ вĕт-ха. Пуçламăш классенче ача мĕнле вĕреннинчен вăл малалла еплерех аталанасси питĕ нумай килет. Ольга Михайловна чуна парса вĕрентнĕрен пулĕ, унăн вĕренекенĕсенчен чылайăшĕ аслă пĕлӳллĕ кăна мар, ырă чунлă та. Паянхи кун Ольга Михайловна аслă класс ачисене историпе обществознани урокĕсене вĕрентет. Унăн урокĕсем яланах интереслĕ.

«Кашни ачан хăйĕн çемйин, халăхĕн историне пĕлмелле, унсăр малашлăх пулмасть», – тет вăл пире уроксенче. Вăл пуçарнипех эпир хамăр йăх-несĕл историне тĕпчетпĕр, краеведенипе çыхăннă проектсем çыратпăр. Шкулăн юбилейĕ тĕлне пĕлтĕр историпе краеведени музейĕ уçрăмăр. Ольга Михайловнан тӳпи пысăк пулчĕ унта.

Пирĕн юратнă вĕрентекенĕн вара çак кунсенче юбилей пулчĕ. Эпир, Чуманкасси шкулĕн вĕренекенсем, ăна чун-чĕререн юман пек çирĕп сывлăх, сурпан пек вăрăм кун-çул, пысăк телей, ĕçре ăнăçусем сунатпăр.

**Наталия СКВОРЦОВА.**

Чуманкасси шкулĕ, 8 класс.

Спорт

# Кубок – «Ударниксенче»

Шăмат кун, январĕн 16-мĕшĕнче, «Оринин» хуçалăх парнисене çĕнсе илессишĕн спорт ăмăртăвĕсем иртрĕç. Шашкăпа шахматла тата волейболла выляса вăй виçме 10 команда кăмăл тунă. Шашкăлла вылякансем хушшинче мала кил хуçисем тухнă, шахмат вăййи вара «Ударник» хуçалăхăн командине «суйласа илнĕ». Шашкăлла вылякансенчен А. Прокопьевпа Н. Репинана (иккĕшĕ те «Оринин» командăран), шахматла вылякансенчен А. Степановпа («Ударник») М. Терентьевана («Оринин») уйрăммăн палăртнă.

Волейболла выляса та «Ударниксем» çĕнтерӳçĕ ятне тивĕçнĕ. Иккĕмĕш вырăна «Оринин» команда, виççĕмĕш вырăна Шупашкар хулинчи ОМОН команди тухнă.

Пĕтĕмĕшле итогсем тăрăх кубок «Ударник» хуçалăх командин аллинче. 2-мĕш тата 3-мĕш вырăнсенче – «Орининпа» «Передовик».

# Хĕллехи сезон уçăлать

Хĕллехи спорт сезонне Муркашра çитес шăмат кун, январĕн 23-мĕшĕнче, 10 сехетре уçма палăртнă. Çак кун йĕлтĕр базинче 2 тата 3 километрлă дистанцисемпе йĕлтĕрçĕсен – хĕрарăмсемпе арçынсен, хĕрсемпе яшсен – ăмăртăвĕ иртет. Пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан вăтам тата тулли мар вăтам шкулсен, ĕç коллективĕсен командисене пурне те ăмăртăва йыхравлаççĕ.

Малтанхи кун вара, январĕн 22-мĕшĕнче, командăсем полиатлон енĕпе (арçынсемпе яшсем – турник çинче туртăнассипе, хĕрсемпе хĕрарăмсем – урайĕнчен тĕртĕнессипе) ăмăртаççĕ. Ку ăмăрту Муркашри вăтам шкулăн тирĕнче 12 сехетре пуçланать.


## Пĕлтерӳсем. Объявления

Продаю месячных и двухмесячных бычков швицкой породы. Тел.: 8-927-863-28-05.

СПУТНИКОВОЕ АНТЕННЫ «ТРИКОЛОР»
6700 руб. Установка, гарантия
Тел.: 8-906-385-29-30. 3-6.

Продаем: доски 25-50 мм (обрезные, необрезные), брус любого сечения, жерди, подтоварник. Изготовим на заказ: срубы, беседки любого размера. Цена договорная, доставка по району бесплатно.
Тел.: 8-927-667-28-32, 8-919-656-13-84. 1-5.

Спутниковые антенны «ТРИКОЛОР»
с установкой, гарантией и обслуживанием.
Тел.: 8-905-345-77-19. 1-6.

Продаю качественные керамзитобетонные блоки от 26 руб/шт., действуют новогодние скидки. с. Моргауши, «Агропромснаб». Тел.: 8-905- 340-07-78. 2-5.

ЗАЙМЫ
и СБЕРЕЖЕНИЯ
для пайщиков
с.Моргауши, ул.50 лет Октября, 5
(83541) 6-23-10, 37-48-92
выгодные % ставки
КПКГ “Капитал Экспресс”
Св-во о рег. 21 №002062014 от 23.09.2009г.

Вăкăрсем, тынасем туянатăп.
Тел.: 8-903-063-07-57. 1-2.


**Администрация Моргаушского района сообщает о наличии свободного земельного участка, распределяемого на праве аренды, из категории «земли сельскохозяйственного назначения» с кадастровым номером 21:17:121301:829, местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Ярабайкасинское сельское поселение, участок расположен в юго-восточной части кадастрового квартала 21:17:121301, для ведения личного подсобного хозяйства, площадью 6201 кв. м.**
**Заявки принимаются в течение месяца с даты опубликования объявления по адресу: 429530, село Моргауши, улица Мира, дом 6 (здание администрации), кабинеты № № 312 и 317, с 8-00 час. до 17-00 час. ежедневно, кроме выходных дней. Телефон для справок: 62-2-66.**

**Администрация Моргаушского района сообщает о наличии свободного земельного участка, распределяемого на праве аренды, из категории «земли сельскохозяйственного назначения» с кадастровым номером 21:17:271201:82, местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Юськасинское сельское поселение, участок расположен в юго-западной части кадастрового квартала 21:17:271201, для ведения личного подсобного хозяйства, площадью 6010 кв. м.**
**Заявки принимаются в течение месяца с даты опубликования объявления по адресу: 429530, село Моргауши, улица Мира, дом 6 (здание администрации), кабинеты № № 312 и 317, с 8-00 час. до 17-00 час. ежедневно, кроме выходных дней. Телефон для справок: 62-2-66.**

**Администрация Моргаушского района сообщает о наличии свободного земельного участка, распределяемого на праве аренды, из категории «земли сельскохозяйственного назначения» с кадастровым номером 21:17:020301:78, местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Ильинское сельское поселение, участок расположен в юго-западной части кадастрового квартала 21:17:020301, для ведения личного подсобного хозяйства, площадью 5825 кв. м.**
**Заявки принимаются в течение месяца с даты опубликования объявления по адресу: 429530, село Моргауши, улица Мира, дом 6 (здание администрации), кабинеты № № 312 и 317, с 8-00 час. до 17-00 час. ежедневно, кроме выходных дней. Телефон для справок: 62-2-66.**

**Администрация Моргаушского района сообщает о наличии свободного земельного участка, распределяемого на праве аренды, из категории «земли сельскохозяйственного назначения» с кадастровым номером 21:17:271401:995, местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Юськасинское сельское поселение, участок расположен в восточной части кадастрового квартала 21:17:271401, для ведения личного подсобного хозяйства, площадью 6200 кв. м.**
**Заявки принимаются в течение месяца с даты опубликования объявления по адресу: 429530, село Моргауши, улица Мира, дом 6 (здание администрации), кабинеты № № 312 и 317, с 8-00 час. до 17-00 час. ежедневно, кроме выходных дней. Телефон для справок: 62-2-66.**

**Администрация Моргаушского района сообщает о наличии свободного земельного участка, распределяемого на праве аренды, из категории:**
**- «земли сельскохозяйственного назначения» с кадастровым номером 21:17:050801:553, местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Большесундырское сельское поселение, участок расположен в центральной части кадастрового квартала 21:17:050801, для ведения сельскохозяйственного производства, площадью 154281 кв. м.;**
**- «земли сельскохозяйственного назначения» с кадастровым номером 21:17:050801:554, местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Большесундырское сельское поселение, участок расположен в центральной части кадастрового квартала 21:17:050801, для ведения сельскохозяйственного производства, площадью 107643 кв. м.;**
**- «земли сельскохозяйственного назначения» с кадастровым номером 21:17:050801:555, местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Большесундырское сельское поселение, участок расположен в центральной части кадастрового квартала 21:17:050801, для ведения сельскохозяйственного производства, площадью 8543 кв. м.**
**Заявки принимаются в течение месяца с даты опубликования объявления по адресу: 429530, село Моргауши, улица Мира, дом 6 (здание администрации), кабинеты № № 312 и 317, с 8-00 час. до 17-00 час. ежедневно, кроме выходных дней. Телефон для справок: 62-2-66.**

**Участник долевой собственности Иванов Николай Петрович, 23.12.1958 года рождения, проживающий по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, Александровское сельское поселение, д. Васькино, ул. Гагарина, д. 1, сообщает о намерении выдела земельного участка в счет доли в праве общей собственности на земельный участок из земель сельскохозяйственного назначения, местоположение которого: Республика Чувашская, район Моргаушский, сельское поселение Александровское, на территории землепользования СХПК «Ильича», участок расположен в восточной части кадастрового квартала 21:17:250801 площадью 1,13 га пашни для производства сельскохозяйственной продукции.**
**Все претензии по месту расположения земельного участка прошу направить в 2 адреса:**
**1. Администрации Александровского сельского поселения.**
**2. Иванову Николаю Петровичу, проживающему по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, Александровское сельское поселение, д. Васькино, ул. Гагарина, д. 1.**

Оринин ял тăрăхĕн администрацийĕ Çĕньял Орининта пурăннă, 30 çул ытла Оринин ял Советĕнче секретарь пулса вăй хунă

**Алексей Димитриевич**
**КОТЕЛЬНИКОВ**

нумай вăхăт чирлесе выртнă хыççăн пирĕнтен ĕмĕрлĕхех уйрăлса кайнă пирки унăн çемйипе тата çывăх тăванĕсемпе пĕрле таранăн хурланса пĕлтерет.

«Муркаш районĕнчи выльăх чирĕсемпе кĕрешекен станци» коллективĕпе Хусанти патшалăх ветеринари институтĕнчен 1984 çулта пĕрле вĕренсе тухнисем хăйсен ĕçтешĕ тата юлташĕ, Москакассинчи ветучастокăн ветеринари фельдшерĕ

**Владимир Валентинович**
**КОЧАНОВ**

вăхăтсăр вилсе кайнă пирки унăн çемйипе тата çывăх çыннисемпе пĕрле таранăн хурланни çинчен пĕлтерет.


**Моргаушская районная газета «Çĕнтерӳ ялавĕ»**

УЧРЕДИТЕЛИ:
Министерство культуры, по делам национальностей, информационной политики и архивного дела Чувашской Республики.
АУ ЧР «Редакция Моргаушской районной газеты «Çĕнтерӳ ялавĕ» Минкультуры Чувашии.

**Главный редактор А.И. ТИХОНОВ.**
**АДРЕС: 429530, Чувашская Республика, село Моргауши, улица Мира, дом 9А.**
**ТЕЛЕФОНЫ: директор-главный редактор - 62-1-36, заместитель главного редактора - 62-2-82, бухгалтерия - 62-1-35, отделы: общественно-политической жизни - 62-2-82, экономики и социальной жизни - 62-1-38. Факс: 62-1-36; E-mail: morpress@cbx.ru**

**Газета зарегистрирована управлением Федеральной службы по надзору в сфере связи, информационных технологий и массовых коммуникаций по Чувашской Республике – Чувашии. Свидетельство о регистрации ПИ № ТУ 21-00073 от 07 декабря 2009 года.**

**Объем 1 усл. печатный лист.**
**Рукописи не рецензируются и не возвращаются, объемом более 2 стр. не принимаются.**
**Редакция не несет ответственности за содержание рекламных объявлений.**

**ИНДЕКС ИЗДАНИЯ: 54822.**
**Газета выходит на чувашском языке по средам, субботам.**
**Дежурный по номеру Николаева Н.Н.**
**Номер подписан 19.01.2010 г.**
**Время подписания в печать: по графику – 17 час. 20 мин, фактическое – 17 час. 20 мин.**
**Заказ Тираж 3890.**

Номер набран и сверстан в РГУ «Редакция Моргаушской районной газеты «Çĕнтерӳ ялавĕ», отпечатан в типографии ГУП "ИПК "Чувашия": 428019 г. Чебоксары, пр. И. Яковлева,13. Качество печати соответствует оттискам, предоставленным редакцией.